

# СЛОВО О МАТЕРИ

# АННЕ, АННЕÇĔМ…

Анне сасси

Сарă кайăк юрă юрлать,-
Пит савăнса итлерĕм.
Савнă аннем юрă юрлать
Ун юррипе килентĕм.

Тăван анне сассине,
Вăл епле юрланине
Ĕмĕрне те манас çук,
Асăмран кăларас çук.

Шăпчăк кайăк юрă
юрлать,-
Пит савăнса итлерĕм.
Савнă аннем калаçать,-
Ун сассипе килентĕм.

Тăван анне сассине,
Вăл епле калаçнине
Нихăçан та манас çук,
Асăмран кăларас çук.

*Юхма Мишши*





## Аннеçĕм, аннеçĕм…

Аннеçĕм, аннеçĕм,
Халь сана тĕлĕкре çеç куратăп,
Калаçса кăшт чуна йăпатасчĕ,
Сан аллун ăшшине ман туясчĕ.
Аннеçĕм, аннеçĕм,
Халь сана тĕлĕкре çеç куратăп,
Анчах эс манпала калаçмастăн,
Ĕлĕкхи пек мана йăпатмастăн.
Аннеçĕм, аннеçĕм,
Халь сана тĕлĕкре  çеç куратăп,
Анчах мĕншĕн эс пĕртте
кулмастăн,
Манпала юнашар та утмастăн...
Ах, аннеçĕм, анне,
Манас çук эп сана ĕмĕрне...

*Роза Шевлепи*

## Тавах,   аннем
### Халăх юрри майлă

Тавах, аннем, çуратнăшăн,
Ятла-ятла вĕрентнĕшĕн,
Ятланăшăн, юратнăшăн,
Шăпчăк юрри пилленĕшĕн.

Тавах, аннем, çуратнăшăн,
Салху чухне хĕрхеннĕшĕн,
Хĕрхеннĕшĕн, юратнăшăн,
Чĕкеç сăнне пилленĕшĕн.

Тавах, аннем, çуратнăшăн,
Мăшăр çунат ӳстернĕшĕн,
Ӳстернĕшĕн, юратнăшăн,
Сӳнми телей пилленĕшĕн.

*В. Урташ*





## Аннеçĕм

Аннеçĕм, ах, анне, ан айăпла пире
Килтен тухса кайса çуренĕрен çĕтсе.
Сана сума суса, чун-чĕререн кӳтсе
Юрлатăп çак юрра, аннеçĕм, сан умра.
Сана сума суса
Юрлатăп çак юрра,
Аннеçĕм, сан умра.
Ку юрă - ман парне сана валли. анне,
Аннеçĕм, ах, анне,    ан айăпла пире.
Çуралнă кил-çуртра эп пулнăран сайра,
Чун-чĕрепе пĕрле, çулсем ытла инçе.
Çуралнă кил-çуртра
Чун-чĕрепе пĕрле,
Çулсем ытла инçе.
Сана курас килсен хут купăса илсе
Юрлатăп çак юрра хурланнă вăхăтра,
Аннеçĕм, ах, анне, ан айăпла пире,
Чун-чĕресем пĕрле, çулсем ытла инçе.
Аннеçĕм, ах, анне,
Чун-чĕресем пĕрле,
Çулсем ытла инçе.

*А. Чебанов*

# Анне

Юратса — савса, эс мана
ӳстерен,
Ырӑ ҫын пулма куллене
вӗрентен.
Ачаш сӑмахсем ӑшӑтаҫҫӗ чуна.
Анне, чӗререн тав тӑватӑп сана.
Анне — эсӗ сар хӗвел шевли,
Анне — маншӑн эсӗ чи хакли.
Анне — тӗнчере эс пӗрре.
Анне — савӑнса тапать чӗре.
Ҫакӑ ҫӗр ҫинче ҫут телейӗм —
санра.
Эсӗ вӗрентни яланах — асӑмра.
Анне, эп сана чӗререн юратса,
Парнелеп юрра ыр сунса, ыр
сунса.



*Чӗкеҫ Люҫҫи*

**Амăшĕ шухăша путса ывăлĕн палăкĕ умĕнче тăрать, ывăлне чĕрĕ чухнехи пек куçĕнчен пăхать. Ывăлĕ те амăшне куçран пăхать… Амăш юратăвĕ вилĕмсĕр тенине хирĕçлесе кам сăмах калайтăр… Ăна нимĕнле юратупа та танлаштараймăн.**

***Роза Шевлепи***





Пӗртен-пӗр сап-сарӑ
хӗвел тӳпере,
Пӗртен-пӗр юратнӑ
анне чӗрере.
Этемшӗн хӗвелсӗ ҫут
кун пулас ҫук,
Анне пулмасан маншӑн
пурнӑҫ та ҫук…

*Юхма Мишши*

## ЧИ ЮРАТНĂ ÇЫННĂМ, АННЕ

Эх, аннеçĕм, пĕртен-пĕр анне,
Санран хаклă çын çук тĕнчере.
Эс çĕклетĕн чуна-чĕрене,
Ырă пурнăç пиллетĕн пире.
Эх, аннеçĕм, пĕртен-пĕр анне,
Санран çывăх çын çук тĕнчере.
Эс сыхлатăн атте кил-çуртне,
Кунĕн-çĕрĕн çунатăн ĕçре.
Эх, аннеçĕм, пĕртен-пĕр анне,
Санран савнă çын çук тĕнчере.
Эс упратăн çемье илемне,
Пĕр самант та манмастăн пире.

*В. Давыдов-Анатри*





## ТАВАХ СИРЕ, АТТЕ-АННЕ

Тавах сире, атте-анне.
Эсир пире ача чухне
Юрла-юрла сиктернине
Эпир манмастпăр ĕмĕрне.
Тавах сире, атте-анне.
Эсир пире ăс панине,
Телейлĕ çул пилленине
Эпир манмастпăр ĕмĕрне.
Тавах сире, атте-анне.
Эсир пире вĕрентнине,
Ыр кăмăлпа ăшăтнине
Эпир манмастпăр ĕмĕрне.
Тавах сире, атте-анне.
Эсир пире сыхланине,
Чун-чĕререн юратнине
Эпир манмастпăр ĕмĕрне.

*В. Давыдов-Анатри*

**КАҪАР, АННЕ**

Каҫар, анне, час-час
ҫырмарӑм,
Ан кӳренсем, ан ӳпкеле.
Сан умӑнта сахал-и парӑм,
Хӑҫан татса пӗтермелле!
Каҫар, анне,чунри ҫунатӑм,
Сисетӗп эп, тек ан пытар -
Ҫыру ҫук чух хыпса ҫунатӑн,
Пӑшӑрханса кӗтен хыпар.
Аннеҫӗм, эс мана ӑсатрӑн
Инҫе ҫула, ҫӗн хулана.
Ху ачуна асран ямарӑн,
Эп этем мар мансан сана!

*В. Давыдов-Анатри*





# АННЕ УМĔНЧИ ПАРĂМА...

Анне умĕнчи парăма
Эпир татас çук ĕмĕрне.
Çакăн çинчен ăнланман
Ĕмтернĕ чухне
Кăкăрне.
Шкула çÿреме тытăнсан
Вăл савăннă саншăн чунтан.
Ачи ун пырать ăс пухса,
Пымасть вăл юлса ушкăнран.
Анне йăлт курать те пĕлет:
Ун ывăлĕн пур-мĕн савни.
Кĕртме пултарать кин киле -
Савниййĕ, тен, пире çырни.
Хирте сухалать те акать,
Ачи вăй илет кулленех.
Каять вăхăтра салтака-
Ан хыптăрччĕ вут çĕр питне.

Георгий Ефимов

## АННЕНЕ

Тěнче çути кăтартнипех, анне,
Тавтапуçа эс тивěç манăнне.
Çуратнине асна илсен, ялан
Ах ахлатса сывлаттăн эс кайран.
Çемçе йăвара мар аталанма
Тÿр килнě ман чуна, çунатăма.
Кипкеренех хěн-хур юррипеле
Эп тухнă паллашса чěрепеле.
«Куланайне!»—тесе, юрлисене
Тăратнă тăтăш саламат айне.
Тырри-пулли иккен çав сулхине
Хура кěртех пушатнă пÿлмене.
Сурпан çакки, хушпу тата-тата,
Куштансемпе çÿренě старăста.
Çити-çитми пирки пайтах куççуль
Шур чěрçитти арки пуçтарнă пуль…
Тавах, анне, тавах сан куççульне,
Куççуль тин мар çăвать чăваш çулне.
Пилле мана — кашни ун тумламне
Ахаххăн ялтратмашкăн малашне!

*Петěр Хусанкай*





## МАМИНЫ УРОКИ

Передо мною образ
мамы,
Ее морщины, седина…
Жаль, лишь с портрета
смотрит мама,
И тихо катится слеза…
Сижу, пишу я эти строки,
А кадры жизни все
идут…
Пройти бы мамины
уроки,
Но жаль, что время не
вернуть.

Маргарита Архипова

**Письмо маме**

Не думай, родная, о страшном.
Оно не пугает, когда
Ты в будничном и домашнем
Себя растворишь без следа -
В твоей повседневной работе
По дому, по саду... И вот
Оно в суете и заботах
Ослабит тиски, отойдёт.
И вновь запоздалой весною
В окно постучится сирень.
Уже не покажется злою
От ветки упавшая тень.
И ты, двери в сад отворяя,
Приветствуешь звуки весны...
Пускай тебе снятся, родная,
Цветные, весёлые сны!

*Маргарита Маркова*





Любите маму - ангела дорог,
Её любовь - как музыка Небес,
Её, как Ангела, дарует Бог,
Чтоб на Земле изведать мир чудес,
Чтоб доброту не накрывал обман,
Истоки-корни сохранить в душе
И не попасть к порокам, в тот бурьян,
Где прячется реальность в мираже.
Цените маму - мудрости исток,
Она как врач - уймет гордыни стресс.

*Галина Белгалис*

**АННЕНЕ**

**Чи ачаш, чи
илемлĕ, чи çепĕç
Сăмахсем çеç сана
каласа
Саламлатпăр,
юратнă аннеçĕм,
Чунтанах ырлăх-
сывлăх сунса.
Мĕн тери ăшă
кăмăллă, ырă
Эсĕ, хаклă аннеçĕм,
ялан.**

***Лариса Сергеева***

Слава богу, что ты есть на свете,
И спасибо за сердце твое,
Что поймет, не осудит, приметит,
Что пригреет дитяти свое.
Сердце Матери - святое,
Человечество ты сохрани!
Сердце Матери - всем дорогое,
Ангел Божий, его береги!

*Анжелика Михайлова*





**МАМЕ**

**Пусть ветер развеет сомненье и горе,**
**Сотрет всю тревогу с лица твоего.**
**Пусть он принесет тебе радости море,**
**А грусть пусть исчезнет из мира сего.**
**Ночное светило пусть силы прибавит,**
**Напишет улыбку на лике твоем.**
**А солнце теплом своим всех пусть одарит.**
**И станешь ты счастлива в мире своем.**
**Забудешь ты напрочь про боль и**
**усталость –**
**Спокойствием будешь ты вся объята.**
**Прекрасной такой чтоб навеки осталась.**
**Из списочка смертных ты будешь снята.**
**Лишь избранным дается право такое.**
**Одной из немногих являешься ты.**
**Для кого-то «Мама» - лишь имя родное,**
**А кто-то не ценит, ломает мосты.**

***Мария Майкова, Кугеси***

# МАТЕРИ

Нынче ночку целую
Белый шёл снежок.
Песней белой-белою
В сердце он залёг.
Мамочка, к рассвету
Белый снег утих...
Не растает к лету
Снег волос твоих.
Через тучки-горочки
Держит путь луна.
Шлёт лучи-иголочки
К нам в окно она.

*Раиса Сарби*





## Аннене

Вăхăтсăр эс ватăлнă, анне,
Кун-çулу, чăнах, ансат килмерĕ,
Парăнмарăн. Йăх-ăру еткерĕ —
Ачусем сиплеççĕ чĕрӳне.
Алă пӳрнисем те пĕр пек мар.
Эпир йышлăн: миçе тĕрлĕ кăмăл!
Пĕрлĕх пур тăк — инкекре те çăмăл,
Йыхăр çеç — пулатпăр юнашар!

*Валентина Тараватт*

## АННЕ КĔТЕТ

Кĕтмен çĕртен сăлтавсăрах
Чĕре сикет.
Апла хăтланмĕ кăлăхах —
Теме сисет.
Анне сăнарĕ самантрах
Аса килет.
Нихçанхинчен те хытăрах
Курас килет.
Çыру çырма ларас... Пулмасть,
Халь вăхăт çук.
Часрах халех çула тухас —
Шел, майĕ çук.
Ах, темшĕн, ним сăлтавсăрах
—
Чĕре сикет.
Апла хăтланмĕ кăлăхах —
Анне кĕтет.

*Алина Николаева*





# АХ, АННЕÇĔМ

Тăван кил еннеллех çул хыватăп,
Саншăнах-çке, анне, тунсăхлатăп.
Çума-çумăн ларса
Чĕререн калаçассăм килет.
Ах, аннеçĕм, аннеçĕм, аннеçĕм,
Хамăн пуçăм шуралнă пулсан та
Чĕрçӳ çине выртса
Ыйăха ман путассăм килет.

*Мария Горшкова*

# ÇЫРУ

Эп чи ачаш сăмах шыратăп,
Чĕрем туртать тăван киле.
Хĕвел пекех салам яратăп,
Аннем, сана курас килет.
Çут сăнарна асрах тытатап,
Савса упратăп яланах.
Эп иксĕлми телей сунатăп
Пур кăмăлтан, аннем, сана.

*Юрий Петров*





# СПАСИБО
# ЗА ВНИМАНИЕ!